Вырмана хутшăнакан техникăпа усă куракансене пĕлме

«Трактор» уйăхлăх-операци пуçланчĕ

Ял хуçалăхĕнче чи хĕрӳ ĕç çи тапхăрĕ пырать: выльăх апачĕ çителĕклĕ янтăламалла, вырма кантăкран шаккать – ăна тивĕçлипе хатĕрленсе çухатусемсĕр ирттермелле, кĕр аки çывхарать – ун пирки шутламалла. Çак вăхăтра, паллах, ял хуçалăхĕнче тракторсемпе вĕсен прицепĕсемĕр, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăсăр ĕçсене агротехника ыйтнă пек пахалăхпа вăхăтра пурнăçлама çук. Анчах çакна курса-пĕлсе тăраканăн ку вăхăтра асăрханулăх пирки самантлăха та манма юрамасть. Ĕçсене халăх йышлă хутшăннă тапхăрта çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Кăна шута илсе республикăра çулленех август уйăхĕнче «Трактор» профилактика уйăхлăх-операци ирттересси йăлара. Умра акă кăçал та çав вăхăт. Çак кунсенче Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕпе В. Димитриевпа Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ В. Антонов аван уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Трактор» уйăхлăх-операци ирттересси пирки приказ кăларчĕç. Асăннă тапхăрта патшалăх техника надзор инспекцийĕн ĕçченĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе пĕрле çынсен тата предприятиорганизацисен харпăрлăхĕнче усă куракан тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕрех пулĕç. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, питех те кивелнĕ техникăна учетран кăларасси малти вырăнта пулĕ.

Иртнĕ çулхи «Трактор» уйăхлăх-операци пирки. Пĕлтĕр çак операцире республикăра 10148 техника единицине тĕрĕсленĕ. Вĕсенчен 198-шĕнче техникăна регистраци правилисене пăсса эксплуатациленнĕ, техосмотр правилисене пăхăнманнисем 769 машина пулнă, 217 тĕслĕхре трактор рулĕ умĕнче тракторист-машинист удостоверенийĕсемсĕр çынсем ларнă, 235 машинăн регистраци документчĕсем пулман, 673 техника единици çул-йĕр хăрушсăрлăхне пăсакан юсавсăрлăхсемпе ĕçе тухни палăрнă.

Айăплисем çак çитменлĕхсемшĕн çирĕп явап тытнăччĕ пулсан, кăçал та вĕсем çак утăмах тăваççĕ-ши? Тĕрĕслĕпĕр – курăпăр.

С. НИКОЛАЕВ,
ЧР Гостехнадзор инспекцийĕн районти инспекторĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: кашни трактор тимлĕх ыйтать.

Сăмах – специалиста

Ампарсем тырă йышăнма хатĕр-и?

Район уй-хирĕсенче «хир карапĕсем» пĕрремĕш каçалăксем турĕç. Малтанхи тухăç та унченхи шанăça тӳрре кăларать. Малтан тырă кĕнĕ йĕтемсем çинче те ăна алас-типĕтес ĕçсем пуçăнчĕç ĕнтĕ. Çĕнĕ çăкăрăн конвеерĕ çинче черетлĕ утăм – ампар. Анчах хатĕр-и-ха вĕсем çĕнĕ çăкăра йышăнма? Кунти ĕçсене туса ирттерме тепĕр кун кирлĕ мар-и-ха? Ыранхи кунпа пурăнакан ку ыйтусене татса панах ĕнтĕ. Ĕлкĕрейменнисем валли вара çапла сĕнӳ.

Тырăна упраннă вăхăтра хурт-хăмăр сиен ан кӳтĕр тесен çĕнĕ тырă çитиччен ампарсене унченхи çӳп-çапран тасатмалла, юсав ĕçĕсем тумалла, нӳрĕ е аэрозольлĕ майпа дезинфекци ирттермелле. Нӳрĕллĕ майпа дезинфекци тăвас пулсан, опрыскивательпе тырă хранилищин шал енне пĕр тăваткал метр пуçне 50 миллилитр раствор шучĕпе «Фуфанон», «Каратэ», «Зеон», «Актеллик», «Кемифос» тата РФ территорийĕнче усă курма ирĕк илнĕ ытти химикатсемпе пĕрĕхсе тухмалла.

Аэрозольлĕ майпа дезинфекци ирттерсен ампар пӳлĕмĕсене виçĕ талăк хупă тытмалла.

Çĕнĕ тырă йĕтем çине киличчен йĕтем таврашĕсене те опрыскивательпе имçамласа тухмалла.

Дезинфекци ирттернĕ чух ĕç хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалла.

А. СЕМЕНОВ,
«Россельхозцентр» ФГУ-н Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ.

Тӳрлетни

Каçару ыйтатăп

Район хаçачĕн июлĕн 26-мĕшĕнчи номерĕнче «Салтакра пуласси – кашни яшăн тивĕçĕ» корреспонденци пичетленнĕччĕ. Асăннă корреспонденцире вĕрентӳ учрежденине тĕрĕс мар кăтартнă. **«Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципалăн вĕрентӳ учрежденийĕ»** вырăнне **«С.М. Михайлов ячĕпе хисепленекен Юнкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципалăн вĕрентӳ учрежденийĕн директорне В.Г. Федорова айăпланă»** тесе вуламалла.

Купа пĕрлех хаçат редакцийĕнчен тата хаçат вулакансенчен каçару ыйтатăп.

Е. ЕГОРОВ,
район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.

Çĕнĕ çăкăр тата пушар хуралĕ: маларах асăрхаттарусем вырăнлă

Вырма ĕçĕсем вут-кăварпа ан туслашчăр

Нумай калатпăр пулсан та, вут-кăвартан асăрханасси унченхиллех малти вырăнта юлать. Çакна кăçалхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне район территорийĕнче пулса тухнă лару-тăру та çирĕплетет. Иртнĕ çул çак куна пирĕн тăрăхра пулнă 27 пушарта çĕршер-çĕршер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 6 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ пулсан, пушарсем тухассипе палăрнă çитменлĕхсемпе тĕллевлĕ ĕçленĕрен кăçал инкексен хисепне 12-не тата пĕр çынна çухатнине хăвартăмăр. Анчах çакă та кашнинех тарăн шухăшлаттарма кирлĕ. Уйрăмах вырма пуçланнă май. Çак ответлă тапхăрта пĕлтĕр пурĕ вунă пушар пулнă пулсан, пушар хăрушсăрлăхне пăхăнманнисем патĕнче утăлăма вут тивни те, «хир карапĕсем» çинче çулăм тухни те пĕрре мар пулчĕ.

Акă черетлĕ аван уйăхне кĕтĕмĕр. Тавралăх çĕнĕ тырпул илемĕпе, унăн тутлă шăршипе тулчĕ. Куратпăр, вăхăт утти хăйĕннех тăвать: анчахрах-ха çур аки кĕрленĕ уйсенче паян сарă тумлă тыр-пул чӳхенсе ларать, тулли пучахсем хресчене вăхăтра ака ирттернĕшĕн тав тунăн пуç тайса халĕ вырмана йыхравласçĕ.

Хирти пӳлмери мар, тет халăхăмăр сăмахлăхĕ. Çакна çĕр ĕçĕнче ӳсекен тата ĕçлекен çын ачаран ăша хывать. Урăхла пулаймасть те. Вырма çĕр ĕçченĕшĕн чи ответлă тапхăр. Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ тырă-пулăна çухатусемсĕр кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртесси – ку чухне кашнин тĕп тĕллевĕ. Халĕ каланине никам та хирĕçлемĕ, анчах çак хĕрӳ тапхăрта пушарсем сехре хăпартни тата вĕсем çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхне самантрах пысăк сиен кӳме пултарни пирки те пытарса хăварма юрамасть.

Вырма пуçлансан республикăра çулленех хире тухнă техника, тырă типĕтмелли агрегатсем, типĕтсе янтăланă утă-улăм, тырă склачĕсем çунса кĕлленнĕ тĕслĕхсем пулаççĕ. Çакă малашлăха пăхса ĕçлекен, «Агропромышленноça аталантарасси» приоритетлă наци проектне пурнăçлассишĕн тăрăшакан çĕр ĕçченĕшĕн хăрушла ӳкерчĕк. Кунашкалли район территорийĕнче те çук мар. Хамăр енре пулнă пушарсене тишкерсен, «хĕрлĕ автан» тухнин сăлтавĕсем çултан-çул пĕрешкел майлах сыхланса юлни хытах шухăшлаттарать. Вĕсем: вырмара уçă çулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулни, ĕçе хутшăнакан техникăна пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ комплектламанни, çиçĕм çапасран хӳтĕленменни, электрооборудование юсавлă тытманни, тырă типĕтмелли агрегатсене температура датчикĕсемпе тивĕçтерменни (çак сăлтавпа çулленех тырă типĕтнĕ вăхăтра вуншар тонна тырă çунса кĕлете кĕреймесĕрех юлать) тата ытти те. Çаксене курсапĕлсе тăнă çинчех ял хуçалăх производство кооперативĕсенче тата продукци тирпейлекен предприятисенче çĕнĕ тырă пухса кĕртнĕ вăхăтра пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснине, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ каланине-асăрхаттарнине шута хуманнине кашни çулах куратпăр, анчах... Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем вырмана тухрĕç те ĕнтĕ. Анчах çакă мĕн туса çитерейменни çине алă сулмаллине пĕлтермест. Пушар хăрушлăхĕ хĕрӳ ĕç çирен катара тăтăр тесен çĕр ĕçченĕн ĕнер туса çитерейменнине паян пурнăçлассинчен те пăрăнмалла мар. Вырмана хутшăнакансене – хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсене, механизаторĕсемпе рядовой ĕçченĕсене – паян çакăн пек сĕнӳсем парас килет.

1. Кая юлман-ха, вырмана хутшăнакан ял хуçалăх техникине тата тырă типĕтмелли комплекссене пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçе хатĕрленĕ хыççăн специалистсемпе ытти яваплă çынсенчен йĕркеленĕ комисси ятарлă актпа йышăнсан çеç ĕçе кĕртме юрать.

2. Вырмана хутшăнакан техникăна пушара хирĕç кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсемпе нормăпа палăртнă чухлĕ комплектламалла. Çак тĕллевпе кашни комбайн, машина-трактор, хирти е йĕтем çинчи агрегат çинче

иккĕрен кая мар огнетушитель, икĕ кĕреçе, шăпăр, ятарлă ещĕкпе хăйăр, ятарлă шăнăçпа шыв пулмалла. «Хир карапĕсене» пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ чухлĕ комплектламанни хуçалăхсемшĕн уйрăмах хакла лармa пултарать.

3. Вырма тапхăрĕ тырăпа пĕрлех улăмпа та пуян. Çак тапхăрта ăна вăхăтра пуçтарса кĕртме те техника йышлă хутшăнать. Çавăнпа та ку ĕçе двигательсен глушителĕсем çине хĕм сӳнтерекен устройствăсем вырнаçтарман техникăна кăлармалла мар.

4. Хĕрӳ ĕç çине хутшăнакансемпе тăтăшах пушар хăрушсăрлăх правилисемпе инструктажсем ирттермелле, вĕсене пушарпа пуçламăш самантра тĕрĕс кĕрешме вĕрентмелле.

5. Хиртен, улăх-çарантан пуçтарăнса кĕлете, капанурана кĕнĕ тырă-пулă, утăулăм упранакан вырăнсенче, складсемпе ампарсенче хурал тăратассине йĕркелемелле.

6. Çĕнĕ тырă упранакан тата ăна тасатса-аласа типĕтекен вырăнсенче усă куракан электричествăпа ĕçлекен техника хатĕрĕсене вĕсемпе ĕçлеме çирĕплетнĕ яваплă çынсен ĕçе тĕплĕ тĕрĕслесе йышăнмалла. Вĕсемпе ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх йĕркисене, пушар хăрушсăрлăх правилисене, ĕç технологине çирĕп пăхăнса ĕçлемелле. Акă юлашки çулсенче «Сундырский» (халĕ «Рассвет» агрофирма) хуçалăхра тырă типĕтмелли агрегатсем юсавлă марринчен икĕ хутчен тухнă вут-çулăмра темиçе тонна тырă юрăхсăра тухнă пулсан, виçĕм çулхи вырмара Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче тырă типĕтмелли напольнăй сушилка тыррипĕнĕпех юрăхсăра тухрĕ. Самантлăх йĕрке пăсса тимлĕхе çухатнă тĕслĕхсем вырăнсенче çивĕч ыйтусем кăларса тăратни ытти хуçалăхсенче те тĕл пулать-ха.

7. Вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинче хуралçăсем тытасси пирки манмалла мар. Кунта ĕçлекенсем валли пирус туртмалли ятарлă вырăн, алă айĕнчех хăйăрпа шыв, огнетушитель пулмалла.

Напольнăй сушилкăсем пирки çулленех асăрхаттарса тăратпăр пулин те, чылай хуçалăхсенче вĕсене генераторсенчен кирпĕч стенапа уйăрма васкамаççĕ, ГСМ юхнине «асăрхамаççĕ». Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни мĕн патне илсе çитернине виçĕмçулхи вырмара Е. Андреев яч. хис. хуçалăхăн напольнăй сушилкинче тухнă пушар та аван кăтартать.

Йĕтемсем çинчен каласнă май, кунти тепĕр çивĕч ыйту вăл – çиçĕм çапасран сыхланмалли устройствăсем çине çителĕксĕр тимлĕх уйăрни. Йĕтем çине илсе пынă тырăна вăхăтра типĕтсе ĕлкĕрейменнипе вăл хĕрсе каять, çакă çиçĕм çапас хăрушлăха нумай хут ӳстерет. Çавăнпа та çиçĕм çапасран сыхланмалли устройствăсене кая юлмасăр çук çĕрте лартмалла, юсавсăррисене юсамалла.

8. Вырмари тепĕр ответлă ĕç вăл – улăм пуçтарса тирпейлесси. Темех мар темелле, анчах кунта та пушар хăрушсăрлăх правилисене тĕп вырăнта тытмасан инкек алăк умнех пырса тăрать. Çак çултан пăрăнас тесен типĕ улăм патĕнче пирус туртассинчен асăрханмалла, улăм урисене пурне те пĕр çĕре вырнаçтарассинчен хăтăлмалла, вĕсене электропередача линийĕсенчен 15 метртан, çулсем хĕрринчен 20 метртан, çурт-йĕр таврашĕнчен 50 метртан кая мар аяккарах вырнаçтармалла. Утă-улăм хранилищисен алăкĕсене тăтăшах хупса тăмалла.

Куратпăр ĕнтĕ, пĕлетпĕр, ăнланатпăр, вырмари пушарсем пĕри те ăнсăртран тухмаççĕ. Апла пулсан, пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçлени çеç çичĕ хут тар юхтарса ӳстернĕ тырăпулăна тата утă-улăма çухатусемсĕр пухса кĕртме май парать.

П. БАБАНОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев (сăн ӳкерчĕкре сулахайра) «хир карапĕсен» юсавлăхĕпе хăрушсăрлăхĕ çине çулленех пысăк тимлĕх уйăрать.

А. БЕЛОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.

Килти хушма хуçалăх

Лĕпĕше – лĕпĕшпе

«Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен», – тет ваттисен сăмахĕ. Пурнăç уттинче çак чăнлăх час-часах тӳрре тухса пырать. Пĕр тĕслĕхпе паллаштарам-ха. Хамăн пахчара купăста лĕпĕшĕсене сăнанă май эпĕ çакна пĕлтĕм: пĕр çимĕç çине харăсах икĕ лĕпĕш лармасть. Купăста çинче хăй пекех шурă тăванĕ ларнине курсан тепри вĕçсе иртет. Çакна сиссен, унпа усă курса лĕпĕшсене ултталама шутларăм. Юнашарти икĕ купăста йăранĕ пуçĕсене 1,3 метр çӳллĕш пĕрер патак çапса лартрăм. Вĕсен хушшипе 70 сантиметр çӳллĕшĕнче çирĕп çип карăнтартăм. Вĕсем çине 30-35 сантиметр тăршшĕ çипсемпе пĕр-пĕринчен 70 сантиметр уйăрса, шурă пластик банкăсенчен хачăпа касса кăларнă суя лĕпĕшсем çакса тухрăм. Çакна тума пĕр сехет çеç вăхăт иртрĕ, анчах та сăнавĕ эпĕ кĕтнинчен те усăллăрах пулчĕ. Суя лĕпĕшсем темĕнле çанталăкра та, кирек хăш вăхăтра та, купăста йăранĕ çинче вĕлтĕртетсе чăн-чăн лĕпĕшсене хăратса хăваласçĕ. Вĕсенчен пĕри те çăвĕпех купăста çине ларма хăюлăх çитереймерĕ. Кучансем çитĕннĕ май суя лĕпĕшлĕ çипсене икĕ хутчен 20-30 сантиметр çӳллĕш хăпартрăм.

И. СМЕЛОВ.

Сухана хăçан пухса кĕмелле?

Чăн-чăн пахчаçă аван пĕлет, сухан хăй пулса çитнине хăех систерет. Çулçисем çитĕнме чарăнсан вăл çĕр çине выртать. Çак вăхăт сухан пуçĕнче сахăрсем чи нумай пухăнса çитнĕ тапхăр. Вăл ытларах июлĕн иккĕмĕш çурринче е кăшт каярах пулать. Пулса çитнĕ сухана пуçтарассине вăраха яма та юрамасть, мĕншĕн тесен кĕр енне кайнă çумăрлă çанталăкра сухан çĕнĕ тымарсем кăларать. Ун пек сухан вара хĕлле япăх упранать. Çакна сухан тухăçĕшĕн тăрăшакансен аван пĕлмелле.

Паçчаçă, ан ман! Кăларнă хыççăн сухана кĕске вăхăтлăха пулсан та йăран çине хăварсах типĕтмелле. Хыççăн ăна сывлăш лайăх уçăлса тăракан вырăнта 3-4 эрне тытмалла. Хĕл каça сухана пӳлĕмри температурăра е, май пулсан, 2-3 градус ăшăра упрамалла. Кунашкал условисенче сухан аван упранасси пирки иккĕленӳ çук.

А. КАРЕЕВА.

Помидор йăранĕсем çинче

Кĕр çитнĕ май кирек епле пахчаçă та çу каça ӳстернĕ çимĕçсенчен тухăç илесси пирки ĕмĕтленет. Помидор кунта уйрăм вырăнта тăрать. Вĕсем фитофторăпа чирлемине ял çынни кашниех аван пĕлет. Унпа кĕрешме хамăн сĕнĕве парас килет.

Помидорсене фитофторăран тата августри сивĕ тĕтресенчен хăтарма июль вĕçĕнче е август пуçламăшĕнче çак шĕвекпе сирпĕтмелле: пĕр витре шыва пĕр чей кашăкĕ чухлĕ ешĕл сенкер (медный купорос) тата пĕр стакан çунтарнă известь ямалла. Çак шĕвекпе сирпĕтнĕ тĕм çинчен пухса илнĕ томат хуралмасть.

Помидор çулçисем пĕтĕрĕнсе ларсан ӳсен-тăрана 10 литр шыва 2 грамм бор йӳçекĕ хушнă шĕвекпе кашни тĕмĕ пуçне пĕр литртан кая мар шăвармалла.

А. СЕМЕНОВ.